**Салтак амăшĕ**

(1943 çулта çырнă поэма сыпăкĕсем)

**I. Ăсату**

Амăш ывăлне вăратрĕ
Пĕр салхуллă ирхине.
Пуçтарса ăна тăратрĕ
Ăсатма вăрçă хирне.

Йывăр-çке уйăрăлмашкăн
Ӳссе çитнĕ ачинчен,
Пĕчченçи тăрса юлмашкăн
Ватлăх килнĕ кунсенче.

Ăна мар-и вăл çын туре
Ĕçпеле пиçĕхтерсе?
Анчах килчĕ нимĕç-мурĕ
Çынсене инкек кӳрсе...

Хаяр вăрçăпала килчĕ,
Ирсĕр ĕмĕт-шутпала.
Ял-хуласене вăл илчĕ
Хĕçпеле те вутпала...

Амăш пуçтарса тăратрĕ
Хăй юратнă ывăлне.
Татăлса йĕчĕ, ахлатрĕ
Пĕр салхуллă ирхине.

Анчах кăмăлне хытарчĕ,
Шăлса типĕтрĕ куçне.

Йывăр кутамкка тыттарчĕ
Çула тухнă Куçукне.

- Ывăлăм, ылтăнăмçăм, - терĕ,
Ун çине ăшшăн пăхса, -
Тен, чипер пăхма пĕлмерĕм,
Кăмăлсăр ан кай тухса...

Чи малтан аçушăн тавăрăн,
Аллуна пăшал тытсан.
Чаплă çĕнтерӳпе таврăн,
Çулу такăр пултăр сан.

Пул тĕрĕс-тĕкел те сывă,
Умăнта тултăр телей.
Инкекре - тăван çĕршывăм,
Ун чысне эс хӳтĕле.

Хӳтĕле эс тăван халăх
Ирĕкне, ун пурнăçне;
Хӳтĕле ман ватăлмалăх,
Кань курмалăх кунсене...

Эп сана пиллетĕп, - терĕ, -
Ăшă кăкăр сĕчĕпе.
Пур тăшмансене çĕнтер эс,
Сывă тавăрăн, чипер..

Ывăлĕ тав турĕ хытă
Хăйĕн ватă амăшне. –

Хам чĕре çумĕнче тытăп,

Терĕ, - сан сăмахсене.

## II. Иртрĕ уйăх хыççăн уйăх

Иртрĕ уйăх хыççăн уйăх,
Ывăлне кунсеренех
Асилет-çке амăш. Хуйăх
Пусрĕ унăн чĕрине.

Кам чĕрийĕ тунсăхламĕ
Тăван амăш вырăнче?
Шухăшлать пĕр вĕççĕр амăш
Савнă ывăлĕ çинчен...

Çырусем килсе тăратчĕç
Юнлă вăрçă хирĕнчен.
Ывăлĕ çапла çыратчĕ
Хăйĕн çырăвĕсенче:

"Çапăçатпăр пит те вирлĕ,
Анчах вăйлă нимĕç-мур.
Пирĕн те пур-çке мĕн кирлĕ,
Ытларах та пирĕн пур.

Мĕн кирли пулсан - ытти вăл
Хамăртан, пиртен килет.
Ан кулян, аннем, сан ывăл
Çапăçма кăштах пĕлет.

Юлташсем-туссем хастарлă,

Вĕсемпе эп пĕтес çук.
Чĕрере вĕрет хаярлăх
Фрицсене çунтарнă чух

Пирĕн сывлăшпа çав урнă
Кашкăрсем сывланă чух
Пирĕншĕн пулаймĕ пурнăç,
Пирĕн пĕр ĕç - çапăçу!.."

Çакăн пек çыратчĕ ывăлĕ
Тăван амăшне ялан.
Вăл ăна сунатчĕ сывлăх,
"Маншăн, - тетчĕ, - ан кулян..."

Анчах пĕринче ак килчĕ
Амăшне çыру-хыпар.
Амăш час уйăрса илчĕ:
Çырнă ывăль алли мар.

Чĕтрекен аллипе тытрĕ
Çырăва вăл хумханса,
Вулаттарчĕ те шак хытрĕ,
Кĕç каятчĕ йăванса.

"Манăн ывăлăм! Ман ылтăн!
Манăн шанчăкăм!" тесе
Чĕри татăлнă пек хыттăн
Йĕрсе ячĕ хӳхлесе.

Пĕртен-пĕр ачийĕ унăн

Юлашки сывлавĕччен

Çапăçса-мĕн пуçне хунă

Юнлă вăрçă хирĕнче...

### III. Салтак амăшĕ хӳхлени

Куçăмсен сути Куçукшăн,

Епле тӳсĕ ман чĕре?

Е сан тĕллĕн вырăн çук-ши

Çакă çутă тĕнчере?..

Епле чарăнчĕ-ши ахăр

Сан кăвар чĕрӳ тапма?

Хăш этем вăрă-хурахĕ

Хăйрĕ кунçулна татма?..

Мĕн тесе тӳсет-ши çĕрĕ

Кашкăр чунлă çав йăха?

Хăçанччен тата вăл йĕрĕх

Шар кăтартĕ халăха?

Кам кăна çуратса янă

Çав тискер кайăксене?

Хăш аман ылханлă варĕ

Ӳтлентернĕ вĕсене?

Вăл вар çĕртĕр те хуртлантăр,

Хĕсĕрлентĕр вăл ама,

Йăхĕ ун пĕтсе путлантăр,

Кун памасăр никама

Ывлăм, чун-чĕре ăшшийĕ,
Ĕнтĕ кам çине пăхса
Савăнса пурăнăп-ши эп
Хама ўкĕтлĕх тупса?

Пĕтрĕн, харсăр ăмăрткайăк,
Касрăн манăн чĕрене.
Ĕнтĕ кам çынни пăхайĕ
Санăн ватă аннўне?

Халь камра вăл хўтлĕх тупĕ,
Кама пурăнĕ кĕтсе?
Кам ун куçĕсене хупĕ
Юлашки самант çитсен?..

"Ачуна алра сиктерĕп", -
Тенĕччĕ ĕмĕтĕмре.
Кам çине шанса иртерĕп
Халь эп хамăн ĕмĕре?

Кам чĕвĕл саспа тултарĕ
Ман пушаннă пўртĕме?
Кам-ши йăпатма пултарĕ
Мĕскĕн тăлăх чĕреме?

## IV. Ĕç хуйха-суйха сирет

Чул пек йывăр хуйăх пусрĕ
Салтак амăш чĕрине.
Унтанпа вăл пуçне усрĕ,
Хурланать кунсеренех...

Ĕç алли çунать-мĕн ĕçшĕн,
Ĕç хуйха-суйха сирет.
Тăшмана хăвăрт çĕнесшĕн
Халăх пикенсех ĕçлет.

"Арçынсем фронтра çĕмреççĕ
Тăшмана вутпа, хĕçпе;
Фронта пулăшăпăр, - теççĕ, -
Колхозра хĕрӳ ĕçпе.

Куçук амăшĕ те тухрĕ
Çĕнтерӳшĕн ĕçлеме.
Мĕнпур тарăх-çилне пухрĕ,
Вăл ырма-канма пĕлмест.

Тĕлĕнет унтан халь халăх,
Хĕрхенет те хисеплет.
Хисеплет ăна патшалăх,
Пулăшать те хӳтĕлет.

Мĕн тăвăн, вăрçи тăкаклă,
Ик шăпаллă çын - салтак:
Кашнинех тăван пек хаклă
Унăн ывăлĕ ялта...

Вăл çеç мар хавалллă пулчĕ, -
Килчĕ хут таçти ютран;
Урăх туйăмпала тулчĕ
Ун чĕрийĕ çав хутран.

Мĕнле çын-ши кăмăл тунă,
Кам çырать-ши ун патне?
Кам çынни пĕлет-ши унăн
Хушамачĕпе ятне?!

### V. Ывăлсен çырăвĕ

"Ырă кун, тăван аннемĕр,
Таймапуç сире пиртен.
Тиркесе ан тĕлĕнсемĕр
Пирĕн çак сăмахсенчен.

Ку хута çыраççĕ сирĕн
Хаклă ывлăр тусĕсем,
Вăл чи хаклă çынччĕ пирĕн,
Пĕрле иртрĕç вăхăтсем.

Тăванлатрĕç пире юнлă
Çапăçу хирĕсенче,
Пĕр чĕреллĕ те пĕр чунлă
Турĕç вилĕм умĕнче...

Вăл ялан малта пыратчĕ.
Шикленес-тăвасси çук:
Тăшмана вăл хăй шыратчĕ,
Сирĕн ывăлăр Куçук.

Тăрăхлаттăмăр: "Хăй кунĕ,
Çиелтен пăхсан - йăваш.
Анчах йăваш мар-мĕн чунĕ,
Ăшĕнче иккен - чăваш".

"Чăваша пĕлеç мĕнпурĕ..." –
Тетчĕ вăл. Юлташсене
Юрласа паратчĕ юрă,
Шеп ташлатчĕ ташшине...

Юнлă тытăçу пуçланчĕ:
Алпа ал та хĕçпе хĕç.
Нимĕç тем пек тапаçланчĕ,
Ĕçĕ пулчĕ кăлăх çеç...

Çав самант курасчĕ эсĕр
Хăвăр ывлăр вăрçнине,
Вилессе-мĕнне пĕлмесĕр
Вут çине ыткăннине...

Çапăçса, ниме пăхмасăр,
Нимĕç хыççăн ăнтăлса,
Вăл темле, асăрхамасăр,
Пиртен кайнă татăлса.

Нимĕçсем ăна хупланă,
Пур çĕртен те тăкнă вут,
Чĕррĕн те тытма шутланă:
"Парăн! - тенĕ. - Рус, капут".

Кăшкăрать Куçук çиллеслĕн:
- "Капут парăп эп сире!"
Çапăçать пĕччен вилеслĕн,
Пĕр канма пĕлмесĕрех...

Куçук пит йывăр аманнă,
Юнĕ пĕрхĕнсе юхать.
Пулас çук" иккен хаманĕ,
Сывлăшĕ аран тухать...

"Эп ĕнтĕ вилетĕп, - терĕ, -
Уйрăлатăп сирĕнтен.
Аннене çырса пĕлтерĕр
Эп епле вилни çинчен".

Ăна манмĕ ирĕк халăх,
Ĕмĕр тытĕ асĕнче.
Шур чулран çĕкленĕ палăк
Ывăлăр тăпри çинче.

Ешĕл хурăнсем чӳхенĕç
Упраса ун канăçне,
Йывăç-курăк чечекленĕ,
Çăтмахри пек, çуркунне.

Çулçӳрен чыс парса иртĕ
Пуç тайса ун тăприне.
Килсе çӳрĕпĕр эпир те
Асилме çак кунсене...

Тата пĕр сăмах каласшăн
Сире эпĕр, итлĕрсем:
Куçук вырăнне пуласшăн
Эпĕр сирĕн ывлăрсем.

Йышăр пысăкрах пулать, тен
Хирĕç пулмасан эсир –
Эпĕр пурĕ те тăваттăн:
Виç боец, пĕр командир.

Кĕçĕн командир Хĕветĕр,
Пулеметчик Пурхиле,
Боецсем Ваççа та Петĕр
Кĕрес тетпĕр пĕр киле.

Вăл кил пултăр сирĕн килĕр,
Эсир пулăр ыр анне.
Пире ывăллăха илĕр
Хăр Куçукăр вырăнне.

Сывă пулăр, ыр аннемĕр,
Таймапуç сире пиртен.
Тиркесе ан тĕлĕнсемĕр
Пирĕн çак сăмахсенчен".

Çыру вĕçĕнче: Хĕветĕр,
Пулеметчик Пурхиле,
Боецсем Ваççук та Петĕр
Алă пуснă пĕр тĕле...

Чи паха хаваслăх пулчĕ
Куçук амăшне çак хут.
Урăх туйăмпала тулчĕ
Ун чĕри. Темиçе хут

Çырăва вăл вулаттарче
Пĕр сăмахăн суйласа.
Хăй пĕр ним чĕнмесĕр ларчĕ
Тем çинчен-çке уйласа...

Тăлăх мар иккен ун чунĕ,
Вăл юлман иккен пĕччен.
Çĕнĕ шанчăк пур-мĕн унăн
Çĕнĕ ывăлсем çинче...

### VI. Амăшĕн çырăвĕ

Ак мĕнле çыру çыртарчĕ
Амăш ывлĕсем патне:
Чи малтан вăл асăнтарчĕ
Кашни ывăлĕн ятне.

"Кĕçĕн командир Хĕветĕр,
Пулеметчик Пурхиле,
Боецсем Ваççук та Петĕр,
Сире сывлăх пехиллеп.

Эсир тупрăр хăр юратнă,
Хăр шыранă аннĕре.
Эпĕ мар сире çуратнă,
Анчах та вăл пурпĕрех.

Пĕртен-пĕр Куçукăм манăн
Пуçне хучĕ вăрçăра.
Халь ун вырăнне тăванлăн

"Ывăлсем" теп пурсăра".
Çакăн пек çыру çыртарчĕ
Суйласа сăмахсене
Çĕнĕ шанчăк тупнă карчăк
Çĕнĕ ывлĕсем патне.

Ĕнтĕ иртрĕ ăшă çу та,
Иртрĕ кĕр, ак хĕл çитет.
Чĕринче ун ăшă, çутă,
Вăл куллен çыру кĕтет.

Тăтăшах килсе тăраççĕ
Ун патне халь çырусем,
Ырă хыпарсем çыраççĕ
Амăшне ывăлĕсем.

Ун фронтра тăвата ывăл,
Куçук евĕр паттăрсем.
Тăват ывăлне валли вăл
Хатĕрлет халь парнесем:

Алсишсем тăвата мăшăр,
Тăват мăшăр çăм чăлха
Мамăк пек çемçе те ăшă
Кĕрхи çăм çипрен çыхать.

"Сивĕре ан аптăраччăр
Ăмăрткайăк-ывăлсем.
Сăхă тăшмана аркатчăр

Хăвăртрах унта вĕсем.

Сивĕ çил-тăмансем витĕр

Хаклă ывлăмсем патне

Ман чĕрем ăшшийĕ çиттĕр,

Çиттĕр эп янă парне".

*Уйăп, М. Салтак амăшĕ : [поэма сыпăкĕсем] / М. Уйăп // Чăваш сăмахлăхĕ : 10-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки / Н. Г. Иванова, В. П. Никитин, С. С. Самсонова пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар, 1996. – II пай. – С. 314-319.*